Июлӗн 3-мӗшӗ – ГИБДД кунӗ

# Йӗрке тăвассишӗн кашниех явапла

***Çул-йӗр хăрушсăрлăхӗн патшалăх инспекцине (ГИБДД) эпир пурте ытларах хăнăхнă пек «ГАИ» тенипе пӗлетпӗр. Çитес ытлари кун вара ГИБДД инспекторӗсем хăйсен професси уявне паллă тăвассӗ.***

***Уяв умӗн эпир редакци тӗпелне çул-йӗр хăрушсăрлăхӗн патшалăх инспекцийӗн районти уйрăмӗн пуçлăхне – полици капитанне Сергей Владиславович Иванова чӗнтӗмӗр. Çулсем çинчи лару-тăрупа, июлӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа административлă право нормисене пăснишӗн яваплăх пысăкланнипе паллаштарма ыйтрăмăр.***

– Çул-йӗр çинчи лару-тăру çуран çӳрекенсенсем, водительсем хăйсене мӗнле тытнинчен килет. Çавăнпа та пирӗн ӗçри тӗп задача – вӗсене хăрушсăрлăх правилисене пăсасран асăрхаттарасси тата çул-йӗр çинчи инкексен сăлтавӗсем пулса тăракан преступленисене тупса палăртасси. Юлашки çулсенче автомашина шучӗ самаях нумайланни вара лару-тăрăва çивӗчлетет. Акă кӗçнерни кун кăна-ха М–7 трасса çинче хăрушă аварире пӗр çын пурнăçран уйрăлчӗ. Инкек сăлтавӗ – транспортсем хушшинчи интервала пăхăнманни, хирӗç килекен транспортсен речӗ çине тухни. Пысăк фургонлă машина малтан çăмăл машинăпа, хыççăн хăйӗн пек пысăк машинăпа çапăнать. Питӗ хăрушă авари пулчӗ вăл.

Аварисен хисепӗ пирки калас пулсан иртнӗ пилӗк уйăхри кăтартусемпе паллаштарма пултаратăп. Çак вăхăтра çулсем çинче пурӗ 18 инкек пулнă. Вӗсенче 7 çын пурнăçӗ татăлнă, 20 çын суранланнă.

Аварисен тӗп сăлтавӗсем – пысăк хăвăртлăхпа çӳрени, хирӗç килекен транспорт речӗ çине тухса кайни, транспорт хатӗрӗсем хушшинчи интервала тытса пыманни. Руль умне ларнă 32 ӳсӗр водителе административлă майпа явап тыттарнă. Эрех ӗçнӗ водительсем тата правасăр «водительсем» те – аварисен сăлтавӗсем.

Пурӗ вара çул-йӗр çинче йӗркене пăснă 1042 тӗслӗх тупса палăртнă, панă штрафсен пӗтӗмӗшле калăпăшӗ 413100 тенкӗ чухлӗ. Пирӗн инспекторсем тăрăшнипе 9 преступлени уççа пама пултартăмăр.

Июлӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа çул-йӗр хăрушсăрлăхӗпе çыхăннă административлă право нормисене пăснишӗн саккунпа килӗшӳллӗн яваплăх пысăкланчӗ. Сăмахран, чăрăну тума ирӗк паман çул-йӗр паллисене е çул çинче ӳкернӗ паллăсене пăхăнманшăн (РФ КоАПри 12.16 статйин 4 тата 5 пайӗсем) ку таранччен 300 тенкӗ штраф пулнă пулсан, ырантанпа – 1500 тенкӗ тата транспорт хатӗрне тытса чарассӗ. Çак тата ытти йӗркене пăснăшăн яваплăх ӳсни пирки вулакансене çитес вăхăтра хаçат урлă тӗплӗн пӗлтерӗпӗр.

Паян вара пурне те çул-йӗр хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмаллине тата çул çинче яланах тимлӗ пулмаллине аса илтерсе хăварас килет. Ӗçтешсене уява саламласа çирӗп сывлăх, тăнăçлăх сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА** калаçнă.

# Инкекре çын пурнăçӗ татăлнă

Полици хроникинчен



Иртнӗ вырсарни кун ирпе М–7 трасса çинче Юнкăпуçӗнчен инçех мар хăрушă авари пулса иртрӗ. Инкек 20 çулхи Çӗнӗ Шупашкар хӗрӗн пурнăçне татрӗ. Вăл, çак машинăра **(сăн ӳкерчӗкре)** хыçалта ларнăскер, хăрушсăрлăх пиçиххийӗпе çыхăнман пулнă. Авари хыççăн вун пилӗк минутран вилсе кайнă.

Çак инкек Сăр хӗрринчен Çӗнӗ Шупашкара çул тытнă машина водителӗ ӳсӗррипе пулса тухнă. Вăл машинăна «тытса чарайманран» ӗнтӗ машина кювета сикнӗ. Водителе тата тепӗр виçӗ пассажира (пурте Çӗнӗ Шупашкар хулинче пурăнакан çамрăксем) тӗрлӗ сурансемпе Шупашкарти больницăна леçнӗ.

Руль умне ӳсӗрле лармалла марри, хăвăртлăх режимне пăхăнмалли пирки тăтăшах калатпăр. Хăрушсăрлăх пиçиххийӗсене те машинăра ахальтен туса паман. Çавăнпа та хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса çул çинче кашнин тимлӗ пулмаллине ан манăр.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**ГИБДД инспекторӗ.**

Тав тăватпăр

Патаккасси ялӗнче пурăннă пирӗн хаклă çыннăмăра Валериян Серафимович Смирнова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирӗнпе пӗрле пайланăшăн Муркаш районӗн халăха социаллă хӳтлӗх паракан пайӗн пуçлăхне Н. Петровăна, Муркашри халăхăн социаллă ыйтăвӗсене тивӗçтерекен центрăн пуçлăхне О. Ивановăна тата вӗсен коллективӗсене, районти «Госстрах» етӳçине В. Вязова, Муркашри банкӗн пуçлăхне Ю. Иванова, «Оринино» хуçалăх ертӳçине Ю. Шишокина тата унăн коллективне, райгазра пӗрле ӗçленӗ юлташӗсене, Муркаш ялӗнчи Куликовсен, Хорнуй ялӗнчи Скворцовсен, Мулкачкассинчи Уткинсен, Лапкас ялӗнчи Архиповсен, Оринин ялӗнчи Васильевсен, Ивановсен, Çӗньял Оринин ялӗнчи Саввовсен, Ивановсен, Лантăш ялӗнчи Любимовсен çемйисене, çывăх тăванене, хăтасемпе тăхлачăсене, кӳршӗсене, ял-йыша, унта пынă пӗтӗм халăха чун-чӗререн тав тăватпăр.

**Смирновсен çемйи.**

Пирӗн çемьере пулса тухнă йывăр лару-тăру пирки суркунне район хаçачӗ урлă пӗлтернӗччӗ. Унтанпа вăхăчӗ самаях иртрӗ. Пирӗн йывăрлăха чунпа ăнланнă çынсем чылайăн пулчӗç. Халӗ çурт хăпартса çивитти витме пултартăмăр ӗнтӗ. Çавăнпа та пире пулăшнă ял халăхне пурне те, районти ача сачӗсенче вăй хуракансене питӗ пысăк тав сăмахӗ калатпăр. Эсир ырă туни ырăпах таврăнтăр. Хам та чылай вăхăт ача садӗнче ӗçленӗрен çак çӗнӗ пӳртре çемье ача сачӗ уçас пирки те шухăшлатăп. Тивӗçлӗ органсене çитсе калаçнă – май пур. Мăн Сӗнтӗр тăрăхӗнче ача садне вырнаçас текенсен черечӗ вăрăм. Çавăнпа та тен тăрăшсан çӗнӗ çул тӗлне çемье садикне те уçма май килӗ. Вырăнта пире ăнланакансем, пулăшма килӗшекенсем тупăнасса шанатăп. Паллах, вӗсен ачисене садика малтанах илме шантаратпăр. Хальлӗхе вара урай сарма пултаракансен пулăшăвӗ кирлӗ. Ӗçшӗн тӳлетпӗр.

**Р. ПЕТРОВА.**

Лап Олкаш ялӗ.

Редакци почтинчен

# Тăван ялăм Шуркасси

Çак илемлӗ çӗр чăмăрӗ çинче кашни çыншăн хаклă вырăн пур. Юрататпăр эпир хамăр яла: унăн шывӗсене, вăрманӗсене, улăхӗсене... Тӗнчере пин-пин ял, анчах та этемӗн амăшӗ те пӗрре пулнă пек тăван ялӗ те унăн пӗрре.

Июнӗн тăххăрмӗшӗнче Шуркасси ялӗнче пилӗк çулта пӗрре пулакан ял уявӗ саккăрмӗш хут иртрӗ. Тӗрлӗ çӗртен килсе çитрӗç кунта: Мускавран, Анат Тагил хулинчен, Волгоградпа Саратов облаçӗсенчен, Тутар Республикинчен, паллах, Шупашкартан та.

Халăх каç енне ялти клуба пухăнчӗ. Муркаш район администрацийӗн пуçлăхӗ Р. Тимофеев, Ярапайкасси ял тăрăхӗн пуçлăхӗ В. Голубев, «Герой» хуçалăх ертӳçи Г. Иванова та ял халăхне саламласа вӗсемпе пӗрле савăнчӗç.

Уява аякран килнисен аса илӗвӗсем те, ташă-юрă та илем кӳчӗç. Шурча артисчӗсен, Аликпа Владислав Дмитриевсен ансамблӗн концерчӗ пурин кăмăлне те хăпартрӗ.

Хăнасем хăйсене чӗнме манманшăн уява йӗркелекенсене тав турӗç. Тепӗр уява пурте пухăнма шантарчӗç.

**С. ТРОИЦКАЯ,**
**Шурча ял библиотекин библиотекарӗ.**

Викторина пӗтӗмлетӗвӗ

# «Ӗç Геройӗ Е. Андреев пирки мӗн пӗлетӗр?»



Нумаях пулмасть Социализмла Ӗç Геройӗ Е.А. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнӗ май район хаçачӗ вулакансем хушшинче викторина ирттересси çинчен пӗлтернӗччӗ. Пӗтӗмпе 40 ыйту çине хуравласа кашни ыйтупа сӗнекен 3 хуравран пӗрне суйласа илмелле пулчӗ вулакансен.

Палăртма кăмăллă, унта хутшăнма кăмăллисем сахалах пулмарӗç. Вӗсем хушшинче шкул ачисем те, аслисем те. Пӗтӗмпе 15 хурав килчӗ редакцие. Викторинăна хутшăнакансене пурне те пысăк тав сăмахӗ калатпăр.

**Халӗ вара тӗрӗс хуравсене пӗлтеретпӗр:**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 – «ă» | 11 – «б» | 21 – «ă» | 31 – «а» |
| 2 – «а» | 12 – «ă» | 22 – «а» | 32 – «а» |
| 3 – «б» | 13 – «а» | 23 – «а» | 33 – «а» |
| 4 – «а» | 14 – «а» | 24 – «а» | 34 – «а» |
| 5 – «а» | 15 – «а» | 25 – «б» | 35 – «б» |
| 6 – «б» | 16 – «б» | 26 – «ă» | 36 – «а» |
| 7 – «а» | 17 – «а» | 27 – «ă» | 37 – «б» |
| 8 – «ă» | 18 – «а» | 28 – «а» | 38 – «б» |
| 9 – «а» | 19 – «а» | 29 – «ă» | 39 – «б» |
| 10 – «а» | 20 – «б» | 30 – «б» | 40 – «а» |

Комисси викторина итогӗсене пӗтӗмлетнӗ май 1-мӗш вырăна Çатракассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вăтам шкулта пуçламăш классене вӗрентекен **Светлана Васильевна Федоровăна** пама йышăнчӗ. Вăл 40 ыйтуран 39 ыйту çине тӗрӗс хурав пама пултарнă, 9-мӗш ыйту çинче кăна «такăннă». Светлана Васильевна Евтихий Андреевич Тăван çӗр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чух политработниксен курсӗнче Мускав çывăхӗнче вӗреннӗ тесе хуравланă. Тӗрӗссипе вара вăл Вăрнарти вӗрентӳ полкӗнче пулнă.

Çурлатринче пурăнакан **Василий Кузьмич Крючковпа** Муркашри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вăтам шкулта вӗренекен **Юлия Егорова** 3 хуравра йăнăшнă. Çапла вара вӗсем 2-мӗш вырăна тивӗçрӗç.

3-мӗш вырăн йышăннисем харăсах 4-ăн. Вӗсем хуравсенче 4-шар йăнăш тунă. Кусем вӗсем Хорнуй ялӗнчи **Нина Ивановна Ершова**, Кашмашри **Нина Михайловна Чаплина**, Çурлатринчи **Геннадий Михайлович Оньков** тата **Муркашри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вăтам шкулта 10–11 классенче вӗренекенсен ушкăнӗ.**

Викторина çӗнтерӳçипе призлă вырăн йышăннисене район хаçачӗн редакцине ӗç кунӗсенче грамотăсемпе парнесем патне кӗме ыйтатпăр.

**Хаçат редакцийӗ.**

Каникул

# Асăмрах эсир, лагерь кунӗсем!



Шкулсенче ӗçпе кану, сывлăха çирӗплетмелли лагерьсенчи смена вӗçленчӗ. Тӗлӗнмелле хăвăрт иртет иккен вăхăт лагерьте.

Кашмашри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул çумӗнчи «Росинка» лагерьте асра юлмалли самант чылай пулчӗ: вăйăсем вылярăмăр, викторинăсене хутшăнтăмăр, юрларăмăр, ташларăмăр, юмахсем лартрăмăр, походсемпе экскурсисене çӳрерӗмӗр. «Дельфинсемпе» «Энергия» отрядсене çӳрекенсем смена тăршшӗпех пӗр-пӗринпе ăмăртрăмăр.

Асамлăх кунӗ уйрăмах асра юлчӗ. Çав кун эпир пурте «банан йывăççӗ» патне пухăнтăмăр. Йывăç çинче чăн-чăн банансем çакăнса тăрассӗ – татса ил те çи. Çакă мар-и вăл тӗлӗнтермӗш!

Алина Юрьевна лагерь ертӳçипе Наталия Валериановнăпа Эльвира Анатольевна воспитательсем пирӗн кану лайăх иртрӗр тесе чун-чӗререн тăрăшрӗç. Чăннипех те лагерьти кунсем хаваслă та усăллă иртрӗç. Тавтапуç сире, воспитательсем. Ольга Витальевна повара та пире кашни кун тутлă апат пӗçерсе çитернӗшӗн пысăк тав.

Çакăн пек кану лагерӗсем пурри ачасемшӗн питӗ аван.

**Виктория ТИХОНОВА,**
**Кашмашри тӗп шкулта вӗренекен.**


Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Соловьев Владислав Геннадьевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сесмеры, ул. Дружная, д. 56. Самушкова Лидия Георгиевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сярмыськасы, ул. Мира, д. 5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования КДП «Гигант», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501, площадью 3,14 га и 1,57 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:130501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Волкова Людмила Григорьевна, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 21/22, кв. 354. Волков Харлампий Константинович, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 21/22, кв. 354.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:130501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Сеятель», земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:130501, общей площадью по 1,38 га.

Заказчиком проекта межевания является: Волкова Лидия Андреевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Нискасы, ул. Новая, д. 29.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:130501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Сеятель», земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:130501, общей площадью 2,76 га.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Николаев Николай Евстафьевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 38.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. К. Иванова, земельный участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:230701, площадью 3,78 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванов Виктор Михайлович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тябакасы, ул. Приволжская, д. 24.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:021001, площадью 2,48 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Филиппов Евгений Валерианович, адрес: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Ятманкино, ул. Центральная, д. 12.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, E-mail:ooozemly@ramrbler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, северо-западнее д. Ятманкино.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.